# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
# САККУНЕ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ КАНАШЕН ДЕПУТАЧЕН СТАТУСЕ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 4 СТАТЙИНЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ ДОЛЖНОÇЕСЕНЕ ЙЫШĂНАКАН ÇЫНСЕН СТАТУСЕ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 15 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче*
*йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕн статусĕ çинчен" 2012 çулхи пуш уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 19 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 7 №-сем; 2014, 11 №; 2015, 5, 10 №-сем; 2016, 2, 10 №-сем; 2017, 3, 7, 9 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2020, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ; 2023, пуш уйăхĕн 29-мĕшĕ, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2024, çу уйăхĕн 3-мĕшĕ) 4 статйин 1-мĕш пайне улшăну кĕртес, унта çакăн пек çырса $9^1$-мĕш пункт хушса хурас:

"$9^1$) ют çĕршыв агенчĕн статусне илсен;".

**2 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин патшалăх должноçĕсене йышăнакан çынсен статусĕ çинчен" 2018 çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 76 №-лĕ саккунĕн ("Республика" хаçат, 2018, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2020, раштав уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2021, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 26-мĕшĕ, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ) 15 статйин 5-мĕш пайне улшăну кĕртес, унта "коррупцие хирĕç кĕрешесси çинчен," сăмахсем хыççăн "е тата Федерацин "Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче халăх влаçне йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2021 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 414-ФЗ №-лĕ саккунĕн 19 статйин 21-мĕш пайĕн $9^1$-мĕш пункчĕпе е 28 статйин 1-мĕш пайĕн 10-мĕш пункчĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхре," сăмахсем хушса хурас.

**3 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕ
48 №